26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
9
КĔСНЕРНИКУН
179(6416) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗӖ

Генерал-полковника Толбухина Арми генералне Малиновскине

Кӑнтӑр тата Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ фрончӗсен ҫарӗсем, ӑста маневр туса тата хӑвӑрт тапӑнса пырса, Донец бассейнӗнче нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешсе пысӑк ҫӗнтерӳ турӗҫ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе, пирӗн ҫарсем ултӑ кун хушшинче **Дебальцево, Иловайск, Лисичанск, Енакиево, Горловка, Чистяково, Славянск, Артемовск, Краматорская, Константиновка, Макеевка, Красноармейское, Ясиноватая** хулисене тата **Донбасӑн** область центрне — **Сталино** хулине ҫапӑҫса йышӑнса илчӗҫ. Ҫапла ӗнтӗ Кӑнтӑр тата Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ фрончӗсен ҫарӗсем **Донец бассейнне** — ҫӗршывӑн кӑмрӑкпа промышленноҫӑн паха районне нимӗҫсенчен каялла туртса илсе, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыв аллине таврӑрса пачӗҫ.

Донбасшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче **Цветаев** генерал-лейтенантӑн, **Крейзер** генерал-лейтенантӑн, **Лелюшенко** генерал-лейтенантӑн, **Захаров** генерал-лейтенантӑн, **Жеребин** генерал-майорӑн, **Маковчук** генерал-майорӑн, **Белов** генерал-майорӑн, **Рослый** генерал-майорӑн войскисем, авиаци генерал-лейтенанчӗн **Судецӑн**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **Хрюкинӑн** летчикӗсем тата уйрӑмӑнах **Казарцев** полковникӑн 126-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Крымов** полковникӑн 127-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Говоров** полковникӑн 271-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Станкевский** генерал-майорӑн 346-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Ребриков** полковникӑн 266-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Потапенко** генерал-майорӑн 279-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Власенко** полковникӑн 259-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Владичанский** полковникӑн 50-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Антонов** полковникӑн 301-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Украинский** полковникӑн 230-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Данилов** генерал-майорӑн 54-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Матвеев** полковникӑн 297-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Лазанович** полковникӑн 61-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Карамышев** генерал-майорӑн 59-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Брайлян** полковникӑн 34-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Пономарев** полковникӑн 40-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Шлыгин** генерал-майорӑн 320-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Левин** полковникӑн 96-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Бугаев** полковникӑн 5-мӗш гвардейски уйрӑм мотострелковӑй бригади, **Безнощенко** подполковникӑн 135-мӗш танковӑй бригади, **Савченко** майорӑн 179-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, **Подлесный** майорӑн 243-мӗш уйрӑм танковӑй полкӗ палӑрнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртас майпа **Донбаса** йышӑнса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах палӑрнӑ соединенисемпе чӑҫсене ҫакӑн пек ятсем парас:

„Сталински“:
50-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;
301-мӗш стрелковӑй дивизие;
230-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Енакиевски“:
34-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;
40-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;
320-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Иловайски“:
96-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;

„Чистяковски“:
127-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Горловски“:
126-мӗш стрелковӑй дивизие;
271-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Дебальцевски“:
346-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Артемовски“:
266-мӗш стрелковӑй дивизие;
259-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Лисичански“:
279-мӗш стрелковӑй дивизие,

„Константиновски“:
135-мӗш танковӑй бригадӑна;
179-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкне;

„Макеевски“:
54-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;

„Славянски“:
61-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;
297-мӗш стрелковӑй дивизие;

„Краматорски“:
59-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизие;
5-мӗш гвардейски уйрӑм мотострелковӑй бригадӑна;
243-мӗш уйрӑм танковӑй полка, малашне ҫак соединенисемпе чӑҫсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

50-мӗш гвардейски сталински стрелковӑй дивизи;
301-мӗш сталински стрелковӑй дивизи;
230-мӗш сталински стрелковӑй дивизи;
34-мӗш гвардейски енакиевски стрелковӑй дивизи;
40-мӗш гвардейски енакиевски стрелковӑй дивизи;
320-мӗш енакиевски стрелковӑй дивизи;
96-мӗш гвардейски иловайски стрелковӑй дивизи;
127-мӗш чистяковски стрелковӑй дивизи;
126-мӗш горловски стрелковӑй дивизи;
271-мӗш горловски стрелковӑй дивизи;
346-мӗш дебальцевски стрелковӑй дивизи;
266-мӗш артемовски стрелковӑй дивизи;
259-мӗш артемовски стрелковӑй дивизи;
279-мӗш лисичански стрелковӑй дивизи;
135-мӗш константиновски танковӑй бригада;
179-мӗш константиновски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ;
54-мӗш гвардейски макеевски стрелковӑй дивизи;
61-мӗш гвардейски славянски стрелковӑй дивизи;
297-мӗш славянски стрелковӑй дивизи;
59-мӗш гвардейски краматорски стрелковӑй дивизи;
5-мӗш гвардейски краматорски уйрӑм мотострелковӑй бригада;
243-мӗш уйрӑм краматорски танковӑй полк.

Донбасра пысӑк ҫӗнтерӳ тунине савӑнӑҫлӑн палӑртас майпа паян, сентябрӗн 8-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столици **Мускав** Тӑван ҫӗршыв ячӗпе хамӑрӑн паттӑр ҫарсене, **Донбаса** нимӗҫ захватчикӗсенчен хӑтарса ирӗке кӑларнӑскерсене, — икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс персе салют парать.

Питех те чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, **Донбаса** ирӗке кӑларнӑ ҫӗре хутшӑннӑскерсене, **тав тӑватӑп.**

Хамӑр тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре пуҫӗсене хунӑ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен хӗрлӗ обозӗ

КУКЕҪ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Колхозсенчи комсомол организацийӗсем Ҫамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне государствӑна тырӑ пама хӗрлӗ обозсем организацилесе палла турӗҫ. Сентябрӗн 5-мӗшӗнче государствӑна тырӑ леҫес ӗҫе комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем пурӗ 480 ҫын хутшӑнчӗҫ. Ҫав кун Шупашкарти хатӗрлев пунктне 750 лавпа 200 тонна ытла тӗштырӑ тата пахча-ҫимӗҫ леҫсе тачӑ. «Коминтерн» колхоз государство умӗнчи обязательствӑсене пӗтӗмпех парса татрӗ.

Л. СМИРНОВА.

Хӑмла авӑнӗсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хӑмла лартса тӑвакан колхозсенче хӑмла татас ӗҫ вӗҫленсе пырать. Татнӑ хӑмлана ҫийӗнчех авӑна сарса типӗтеҫҫӗ.

Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз хӑмла типӗтсе пӗтерчӗ. Халӗ хӑмла авӑнӗнче пахча-ҫимӗҫ типӗтме пуҫларӗҫ.

Н. КОНДАКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 7-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКӐРАН

Сентябрӗн 7-мӗшӗнче **ДОНБАСРА** пирӗн ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, 10 километртан пуҫласа 20 километр таран малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 90 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра **БЫЛБАСОВКА, ЯСНАЯ ГОРКА, КРАСНОТОРКА, СЕРГЕЕВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, НОВО-РАЙСКОЕ, АРТЕМОВКА, ОКТЯБРЬСКОЕ, УЛЬЯНОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тата **ОЧЕРЕТИНО, ЩЕГЛОВКА** ятлӑ пысӑк чугунҫул станцийӗсене илнӗ.

БАХМАЧ енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ, 10 километртан пуҫласа 15 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра **ЧЕРНИГОВ** облаҫӗнчи **БАТУРИН** район центрне, Сумы облаҫӗнчи **ДУБОВЯЗОВКА** район центрне, Сумы облаҫӗнчи **БУРЫНЬ** район центрне, **ВЫСОКОЕ, ШАПОВАЛОВКА, ГОРОДИЩЕ, МИТЧЕНКИ, КРАСНОЕ, ПОПОВКА, ПОДЛИПНОЕ, СЕМЯНОВКА, УСПЕНКА, ВОЗНЕСЕНКА** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене, **ДОЧЬ, ЧЕСНОКОВКА, КАЛИНОВКА** ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене илнӗ.

БРЯНСК хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ, уйрӑм участоксенче 10 километртан пуҫласа 15 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра Орел облаҫӗнчи **НАВЛЯ** район центрӗпе чугун ҫул узелне, Сумы облаҫӗнчи **ЗНОБЬ-НОВОГОРОДСКАЯ** район центрне, **БУДРЕ, ШЕШУЕВКА, ТЕРЕБУШКА, ЧЕРНЬ, НОВО-ВАСИЛЬЕВСКИЙ, МЕФЕДОВКА, КРЕНИДОВКА, ЖУРАВКА, КРИВОНОСОВКА, УРАЛОВО** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене. **БОРЩЕВО, СВЯТОЕ, АЛТУХОВО, КОКОРЕВКА, ХОЛМЕЧИ, НЕРУССА** ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене илнӗ.

Пирӗн **ХАРЬКОВРАН** хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре наступлени туса пыракан ҫарсем, уйрӑм участоксенче 4 километртан пуҫласа 7 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра **АСЛӐ ПАВЛОВКА, ТАРАСОВКА, ВЛАСОВКА, ШИЛОВКА, ОГУЛЬЦЫ, ЧЕРЕМУШНАЯ, ОДРЫНКА, РАКИТНОЕ, КӖҪЕН ЛИХОВКА, БАХМЕТЬЕВКА** ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тата **БОРКИ** ятлӑ чугун ҫул станцине илнӗ. Темиҫе хутчен те аларан алла куҫнӑ **ЗЕНЬКОВ** хулине каллех пирӗн ҫарсем йышӑнса илнӗ.

СМОЛЕНСК енче пирӗн ҫарсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене лайӑхлатасшӑн малалла тапӑнса пырса ҫапӑҫнӑ.

Сентябрӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 116 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 115 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Донбасра пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ.

Константиновка хулине йышӑнса илнӗ хыҫҫӑн пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшмана хӗвеланӑҫнелле ывӑта-ывӑта ярса, малалла куҫса пынӑ. Нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑраҫҫӗ, контратакӑсем тӑваҫҫӗ. Пирӗн боецсем хаяр ҫапӑҫусенче 2000 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Совет ҫарӗсем малалла тапӑнса пынине чарса лартма хӑтланса, нимӗҫсем ҫапӑҫӑва танксен пысӑк вӑйӗсене кӗртсе яраҫҫӗ. Пирӗн танкистсемпе артиллеристсем тӑшмана йывӑр ҫухатусем кӳнӗ. Туллимар данниӑйсем тӑрӑх, кун каҫиччен нимӗҫсен 59 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупписене нумай персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Тӑшманӑн техникине чылай пӗтерсе тӑкнӑ хыҫҫӑн нимӗҫ пехотин чаҫӗсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе пӑрахса, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 90 пункта ытла тата темиҫе чугун ҫул станцине йышӑнса илнӗ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 42 самолетне персе ӳкернӗ. Совет авиацийӗ нимӗҫ самолечӗсем нумайӑн пухӑнса тӑнӑ аэродромсене тапӑннӑ. Ҫав аэродромсенче тӑшманӑн 20 самолетне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Бахмач хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

Бахмач хулинчен ҫурҫӗртерехре пӗр часть Сейм шывӗ урлӑ каҫнӑ та урамсенче хаяррӑн ҫапӑҫса, Чернигов облаҫӗнчи район центрне — Батурин хулине йышӑнса илнӗ. Тепӗр участокра пӗр соединени боецӗсем Сумы облаҫӗнчи Дубовязовка район центрне йышӑнса илнӗ. Тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑрать. Анчах та пирӗн чаҫсем пыра-пыра ҫапнине чӑтаймасӑр, вӑл, халӑх пурӑнакан пӗр пункт хыҫҫӑн тепӗр пунктне хӑварса, ирӗксӗрех каялла чакать. Пӗр соединени чаҫӗсем кун каҫиччӗнхи ҫапӑҫусенче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсем пӑрахса хӑварнӑ стрелковӑй тата артиллери хӗҫпӑшалне, боеприпассене тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхне нумай тытса илнӗ. Тыткӑна лекнӗ нимӗҫ салтакӗсем ҫапла каласа параҫҫӗ: Бахмач енче нимӗҫ ҫарӗсем питех те йывӑр ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Ротӑсенче кӑна мар, нумай батальонсенче те 20—30-шар салтак кӑна тӑрса юлчӗ, теҫҫӗ.

* * *

Брянск хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла ӑнӑҫлӑн тапӑнса пынӑ. Комаричи хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, 15 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем, гитлеровецсем хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Алтухово ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктпа чугун ҫул станцине йышӑнса илнӗ. Ытти чаҫсем, ӑнӑҫлӑ маневр туса нимӗҫсене ҫавӑрса илессипе хӑратса, Навля чугун ҫул узелне йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫ пехотине пӗр полка ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 26 тупӑ, боеприпассен, продовольствин тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗн темиҫе складне тытса илнӗ. 200 гитлеровеца ытла тыткӑна илнӗ.

Пирӗн боецсем, партизансемпе пӗрле, нимӗҫсем Германи каторгине хӑваласа пыракан 15.000 совет гражданне ытла ирӗке кӑларнӑ.

* * *

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшманӑн танкӗсемпе тата пехотипе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, нимӗҫсен оборонине татса кӗрсе, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗҫсен 26 танкне тата 120 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

Харьковран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Нимӗҫсене вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пунктсенчен ҫапа-ҫапа кӑларса, пӗр соединени боецӗсем гитлеровецсене пӗр батальон ытла вӗлерсе пӗтернӗ. 6 танк тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ, 9 тупӑ тата 60 пулемет тытса илнӗ. Тепӗр участокра тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ. Совет ҫарӗсен позицийӗсем умӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 400 вилли таран выртса юлнӑ, персе ҫӗмӗрнӗ 10 танк тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ тӑрса юлнӑ.

* * *

Смоленск енче пирӗн ҫарсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене лайӑхлатасшӑн ҫапӑҫнӑ. Дорогобужран хӗвеланӑҫнерехре совет боецӗсем тӑшман контратакине сирсе янӑ. Ҫав ҫапӑҫура 200 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Ельня хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, пысӑк вӑрманлӑ тата шурлӑхлӑ вырӑн урлӑ каҫса, нимӗҫсене ҫирӗплетнӗ темиҫе пунктран хӗссе кӑларнӑ. Ӑнӑҫлӑ маневр тунипе пирӗн подразделенисем гитлеровецсен пӗр батальонне ытла ҫавӑрса илнӗ, халӗ ҫавсене пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Тыткӑна илнисем пур.

Кун каҫиччӗнхи сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 49 самолетне персе ӳкернӗ.

Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче июлӗн 5-мӗшӗпе сентябрӗн 5-мӗшӗ хушшинче нимӗҫсен фашистла ҫарӗсем тунӑ ҫухатусем

Ҫуллахи ҫапӑҫусен икӗ уйӑхӗнче, ҫак ҫулхи июлӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа сентябрӗн 5-мӗшне ҫитиччен, пирӗн ҫарсем фронтӑн мӗнпур участокӗсенче тӑшманӑн 5.729 самолетне, 8.400 танкне, 5.192 туппине, 28.000 автомашинине ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Тӑшман, хӑйӗн вилнӗ салтакӗсемпе офицерӗсене кӑна шутласан та, 420.000 ҫынна ытла ҫухатнӑ. Июлӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа сентябрӗн 5-мӗшне ҫитиччен пӗтӗмпе 1.500.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерӗнчен кая мар стройран тухнӑ (вилнӗ е аманнӑ).

Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн ҫарсем 1.041 танк, тӗрлӗ калибрлӑ 2.018 тупӑ, вӑл шутрах хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем те, 5.382 пулемет, 7.853 автомашина тытса илнӗ.

Нимӗҫсен 38.600 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО

Итали парӑнни

ЛОНДОН, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: союзниксен Ҫурҫӗр Африкӑри ҫарӗсен штабӗ Итали парӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ, тет.

Эйзенхауэр Итали парӑнни ҫинчен калани

ЛОНДОН, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Нью-Йоркран радио-ҫиҫӗм парса ҫапла пӗлтерет: союзниксем Италипе перемири тунӑ, тет.

Аяларах союзниксен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующийӗ Эйзенхауэр генерал пичетлесе кӑларнӑ заявленин текстне пӗлтеретпӗр: «Итали правительстви хӑйӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсемпе пӗрле пӗр сӑмахсӑр парӑнчӗ. Союзниксен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующийӗ пулса, эпӗ Италие вӑрҫӑ тӗлӗшпе перемири патӑм. Перемири условийӗсене Пӗрлешӳллӗ Королевство, Пӗрлешӳллӗ Штатсем тата Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ ырланӑ. Ҫапла ӗнтӗ эпӗ пӗрлешнӗ нацисен интересӗсене сыхласа ӗҫлетӗп. Итали правительстви ҫав условисене пӗр сӑмахсӑр пӑхӑнса пыма пулчӗ. Перемири туни ҫинчен манӑн представитель тата Бадольо маршалӑн представителӗ алӑ пуснӑ. Перемири ҫак самантран пуҫласа вӑй илнӗ. Пӗрлешӳллӗ нацисен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсемпе Итали хушшинчи вӑрҫӑ ӗҫӗсем халех чарӑнаҫҫӗ. Германи агрессорне Итали территорийӗнчен хӑваласа кӑларма пулӑшакан пур итальянецсене те пӗрлешӳллӗ нацисем пулӑшу парса пырӗҫ».

Сентябрӗн 12-мӗшӗнче — комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗ

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн бюровӗ сентябрӗн 12-мӗшӗнче вырсарникун государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе Чӑваш республикинчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникне ирттерме йышӑнчӗ. ВЛКСМ райкомӗсене тата комсомолӑн колхозсенчи пуҫламӑш организацийӗсен секретарӗсене воскресник организацилесе ирттерес ытӑва райкомсен бюровӗсенче, комсомолецсемпе ҫамрӑксен пухӑвӗсенче халех сӳтсе-явма хушрӗ.

Вырсарникунччен колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен хӗрлӗ обозсем организацилеме кирлӗ таран тырӑ хатӗрлесе хумалла. Авӑна кунӗн-ҫӗрӗн ҫапассине организацилемелле. Сентябрӗн 12-мӗшӗнче государствӑна тырӑ массӑллӑн памалла.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ ВЛКСМ Обкомӗн пуҫарӑвне ырларӗ. ВКП(б) райкомӗсене государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникне организацилесе ирттерес ӗҫре комсомола пулӑшу пама хушрӗ. Воскреснике комсомолецсемпе пӗрле колхозниксене те анлӑн хутшӑнтармалла.

НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ЗАХВАТЧИКĔСЕМ ОРЕЛ ХУЛИНЧЕ ТАТА ОРЕЛ ОБЛАÇĔНЧЕ ТУНĂ ТИСКЕР ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тата вĕсемпе пĕр каварлисен тискер ĕçĕсене тата вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, общество организацийĕсене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиенсене тĕпчесе палăртакан

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерни

1941 çулта Орел хулине тата Орел облаçĕн пĕр пайне оккупацилесе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем, пĕтĕм тĕнчери законсене тата вăрçă йăлисене пăсса, унта ирĕксĕрлĕхĕн, юнлă террорăн, вăрă-хурахла çаратассин, чураллă-крепосла ĕçĕн режимне туса хунă та Орел облаçĕнчи хуласемпе ялсене план тăрăх аркатса пыма тата вырăс халăхĕн культурипе историйĕн памятникĕсене пĕтерсе тăкма тытăннă.

Оккупантсен çак преступленийĕсене вĕсем тунă тискер ĕçсемпе аркатусем çинчен çырнă нумай йышлă актсем, асап тӳснĕ çынсемпе свидетельсем кăтартса панисем, судебно-медицински экспертсен заключенийĕсем, оккупантсен хăйсен документчĕсем, Хĕрлĕ Çар тытса илнĕскерсем, тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Н. Н. Бурденко тĕпчесе палăртнисем çирĕплетсе параççĕ.

Хуласемпе ялсене пĕтерсе тăкни тата мирлĕ халăха çаратни

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вырăссен авалхи хулине Орела çаратса тата çĕмĕрсе пĕтернĕ. Заводсене, фабрикăсене, больницăсене, санаторисене, вĕренӳ заведенийĕсене, музейсемпе театрсене гитлеровецсем ванчăксен купи туса хунă. Вĕсем культура учрежденийĕсене, пурăнмалли çуртсене, промышленноçпа коммунальнăй предприятисен çурт-йĕрĕсемпе оборудованийĕсене, чугун çул узелĕпе трамвайăн çулйĕр хуçалăхĕпе сооруженийĕсене пĕтĕмĕшпе пекех çĕмĕрсе пĕтернĕ. Хулари 18.000 ача-пăчапа çамрăксем вĕреннĕ 30 вĕренӳ заведенийĕсенчен 6 çуртне кăна юсаса тепĕр хут ĕçе яма май пур. Хулара пĕр музей кăна, пĕр библиотека кăна тăрса юлнă, вĕсене те чылай аркатса тата çаратса пĕтернĕ. МОПР ячĕпе тăракан лайăх йĕркеленĕ больницăран, 600 койка вырнаçмаскерĕнчен, турпасемпе тимĕр-тăмăр купи кăна тăрса юлнă. Хулари Семашко ячĕпе тăракан больницăна та гитлеровецсем çавăн пекех вараласа çĕмĕрсе тăкнă. Вĕсем ача çуратмалли çуртне, ачасен поликлиникине, ачасен больницине, хĕрарăмсен консультацине, ачасен санаторине тата сывлăха сыхлакан профилактикăллă ытти учрежденийĕсен чылайăшне те аркатса тăкнă.

Хăйсем Орела хыççăн малтанхи кунрах Крупская ячĕпе тăракан библиотекăна çаратса, ун çуртне салтаксем валли казарма туса хунă. Пĕтĕм хаклă литературăна, картăсемпе атласемпе пурне те вĕсем Германие ăсатнă. Ачасен центральнăй библиотекинче 20.000 кĕнеке çаратса пĕтернĕ. Пушкин ячĕпе тăракан библиотекăран 25.000 кĕнеке, Тургенев ячĕпе тăракан библиотекăран 22.000 кĕнеке çаратса пĕтернĕ. Нимĕçсем чугун çул çинчи техникăсен библиотекинчен 15.000 кĕнеке Германие турттарса кайнă.

Фашистла захватчикĕсем Орел облаçĕнчи районсенче те çавăн пекех хуçаланнă. Вĕсем Мценск, Болхов, Кромы тата ытти хуласене аркатса пĕтернĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, Орел облаçĕнчи 19 районра вĕсем государство учрежденийĕсен 583 çуртне, промышленность предприятисен 317 çуртне, çулйĕр хуçалăхĕн 316 çуртне, вĕренӳ заведенийĕсемпе культура учрежденийĕсен 881 çуртне, сывлăха сыхлакан учрежденисен 181 çуртне, коммуналлă хуçалăхăн 284 çуртне, суту-илӳ предприятийĕсен 493 çуртне, 56.866 ярхуçалăх çуртне ишĕлтерсе пĕтерсе тăкнă. Варварсем—нимĕç оккупанчĕсем пырасчен таса та илемлĕ хуласемпе чечекленекен колхозсем пулнă вырăнсенче халĕ ишĕлчĕксемпе кĕл куписем кăна тăрса юлнă.

Орел облаçĕнчи хуласемпе ялсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе кайса, нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем, çар командованийĕпе оккупацин гражданла влаçĕсем тӳрремĕнех хушнă тăрăх [illegible] 11.986 [illegible] 17.161 [illegible] 38.004 сурăхпа качака, 10.994 сысна, 334.415 чăх-чĕп, 82.054 тонна тĕштырă тата ытти пурлăха çаратса илнĕ. Вĕсем хăйсен куçне мĕн тĕл пулнине пурне те: апат-çимĕçсене, тумтирсене, урапа тăхăнмаллисене, вырăн-тăпалăксене, сĕтел-пукансене, чашăк-тирĕксене тата ача-пăча вылямалли япаласене илсе кайнă.

Хăйсем фронтра поражени тӳснипе пула совет халăхĕ çине урса кайнă гитлеровецсем [illegible] Иккĕмĕш танковăй армин командующийĕ Шмидт генерал тата Орел администраци округĕн командующийĕ, хулари çар комендантĕ Гаманн генерал-майор Орел облаçĕнчи хуласемпе ялсене [illegible] ятарласа [illegible] пурне те [illegible] тăкнă. [illegible] Вĕсем вырăс халăхĕн культурипе искусствин памятникĕсене аркатнă, хуласене, саласемпе ялсене çунтара янă.

Мирлĕ совет халăхне тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене массăллăн вĕлерсе пĕтерни

Орел хулинчи тĕрмере нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата граждансене халăх валли лагерь организациленĕ. Тыткăна лекнĕ пулнă тата халĕ ирĕке кăларнă çар çыннисем, уйрăмăн илсен, Толубеев, Рябкин, Кабалдин, Жидков тата ытти юлташсем кăтартса панă тăрăх, çакна палăртнă: Орелри лагерьте [illegible] Тыткăна лекнисене талăкра 200 грамм çăкăр [illegible] панă. Лагерь начальникĕ Гофман майор тыткăна лекнĕ çар çыннисене хĕнеме, выçăхса халран кайнă çынсене [illegible] Тыткăна лекнĕ çар çыннисене аттипе ботинкисене туртса илнĕ те [illegible] пушмаксем панă. [illegible]

Врач Х. И. Цветков, тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕнче пулнăскер, çапла кăтартса панă:

«Хам Орелри лагерьте пулнă вăхăтра курнă тăрăх, çак çапла калама пултаратăп: нимĕçсен командованийĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисене ятарласа пĕтерсе пырать. [illegible] Тыткăна лекнĕ çар çыннисене [illegible] Лагерьти нимĕç врачĕсем Купер, Бĕкель [illegible]

пăхмасăр, совет çыннисене массăллăн [illegible] Тыткăна лекнĕ çар çыннисене [illegible] 3000 çын [illegible] вилнĕ. Тыткăна лекнĕ [illegible] 15—20 [illegible] 50 çынран [illegible] 80 çынна [illegible] «Ĕçе [illegible]»

Тыткăна лекнисене пĕтĕмĕшпе пухса [illegible] «[illegible] лекнĕ çар çыннисен [illegible]» —тесе [illegible] çар çыннисене юлташсен [illegible] «[illegible] [illegible] выртнă. [illegible]—ушкăнĕ-ушкăнĕ [illegible] вырăна [illegible] ӳпне [illegible] ен- [illegible] лекнĕ çар [illegible] нимĕç [illegible] врачĕ Купер [illegible] фельдфебель [illegible] ефрейтор [illegible] вĕлертчĕç».

1942 çулхи мартăн 10-мĕшĕнче тыткăна лекнĕ çар çынни Левитин тĕрме чӳречинчен совет граждăнĕсене персе пăрахнине курнă. «Персе пăрахма, тет вăл, ирхине 10 сехет те 30 минутăра тĕрме килкартин стена патĕнчи яланхи вырăнта тытăнчĕç. Пĕрремĕш корпусран 6 хĕрачана, пĕр хĕрарăма тата 11 арçынна тăватшар çынран тăракан ушкăнсемпе иле-иле тухрĕç. Персе пăрахнă çынсем вилес умĕн чĕтресе выртнă вăхăтра вĕсем хыççăн илсе тухнă ушкăнсене пере-пере пăрахрĕç. Тĕрмерисене гитлеровецсем пистолетпа ĕнсерен пере-пере вĕлерчĕç».

Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин членĕ Н. Н. Бурденко академик хăй тĕпчесе, лагерьпе «лазарет»-тĕрмере, аманнă красноармеецсене тытса усранă çĕрте, тыткăна лекнĕ çар çыннисене тăтăшах вĕлерсе пынине палăртнă.

«Эпĕ курнă картинăсене каласа пама та май çук,—тесе пĕлтерет академик Н. Н. Бурденко.—Ирĕке тухнă çынсене курнă чухнехи савăнăç вĕсем тăнран кайнине курнипе пĕтсе ларать. Çакă шухăша яратчĕ—мĕн пулнă-ха вĕсене? Вĕсем тӳссе ирттернĕ хĕн-хура пула пурнăçпа вилĕм вĕсемшĕн пурпĕрех пулнă пулмалла. Эпĕ çав çынсене виçĕ кун хушши сăнарăм, вĕсен суранĕсене çыхрăм, урăх вырăналла эвакуацилерĕм—вĕсем тăнран кайни пурпĕрех улшăнмарĕ. Малтанхи кунсенче врачсем те хăйсене хăйсем çавăн пек тыткалатчĕç. Лагерьте чир-чĕре пула, выçса çитнине пула, хĕненине пула çынсем вилнĕ, «лазарет»-тĕрмере сурансем пăсăлса кайнине пула, выçса çитнине пула, халран кайнине пула вилнĕ. Гражданла халăхсем вĕсене персе пăрахнине пула пĕтнĕ, персе пăрахассине вара тĕрме килкартинче нимĕçле тĕрĕслĕхпе, расписани тăрăх—ытларикунсемпе эрнекунсенче туса пынă, 5—6-шар çынна ушкăнĕ-ушкăнĕпе персе пăрахнă. Тĕрмерисене нимĕçсем çавăн пекех аякри вырăнсене те турттарса тухнă, унта вырăс войскисем хуларан тухса каяс умĕн тунă траншейăсем пулнă, çынсене унта та пере-пере пăрахнă. Хулара персе вĕлернисене пуринчен ытла вăрманлă вырăнсене илсе тухса траншейăсене пăрахнă. Тĕрмере персе вĕлерес ĕçе çапла туса пынă: арçынсене питпе стена еннелле тăратнă, жандарм револьверпа ĕнсерен пенĕ. Çапла пенипе этемĕн пурнăç центрĕсене сиен кӳнĕ пирки çынсем хăвăртах вилсе выртнă. Хĕрарăмсем нумайĕшĕ çĕр çине ӳпне выртнă та жандарм вĕсене ĕнсерен пенĕ. Иккĕмĕш меслетпе çапла пере-пере вĕлернĕ: çынсен ушкăнне траншейăна хăваласа кĕртнĕ те, вĕсене питпе пĕр еннелле çавăрса тăратса, автоматпа персе вĕлернĕ, пересси кунта та ĕнсерен пенĕ. Курнă çынсем калана тăрăх, траншейăсенче ачасене чĕреллех çĕр чавса пытарни те пулнă, ун пек ачасен виллисене халĕ тупнă».

Курнă çынсемпе свидетельсем кăтартса панă тăрăх, хулари тĕрме патĕнчи масар çинче, нимĕçсем Орел хулине оккупациленĕ вăхăтра, тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе мирлĕ совет граждăнĕсене 5000 çынран кая мар пытарнă. Çакăн пек масарсем, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен жертвисем, Орелпа Орел облаçĕнче вуншарăн шутланаççĕ.

Орел районĕнчи Ломаковски ялсоветĕнче пурăнакансем Н. П. Филатов, П. М. Облепов, И. В. Кузьмин, О. М. Бывшева тата П. К. Филатов çапла кăтартса панă: «Некрасово ялĕнчен инçех мар вырăнта ачасен городокĕ пурччĕ. Çав вырăна йышăнса илнĕ хыççăн гитлеровецсем городокра гражданла халăх валли концентрациллĕ лагерь турĕç. Калама çук йывăр ĕçе пула, выçăхнине пула лагерьте кашни кунах çынсем нумай вилетчĕç, вĕсем хушшинче ачасемпе подростоксем те пурччĕ. Нимĕç фельдфебелĕсем Винклер, Штрикке тата Шольц совет çыннисенчен мăшкăллатчĕç. 1942 çулхи август уйăхĕнче çакăн пек ĕç пулса иртрĕ: лагерьти 4 çынна нимĕçсем виле шăтăкĕ чавма хушрĕç. Çав шăтăк патĕнче вĕсем 8 цыгана персе вĕлерчĕç, шăтăк чавакан 4 çынние те персе пăрахрĕç».

Кишкинкăри психиатрически больницăн главнăй врачĕ А. Х. Беляев, завхоз З. С. Конокотин, рабочисем И. Н. Дронов, В. А. Ларионова, Н. А. Пучкова тата М. П. Романчук çапла пĕлтерни:

«1942 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче гестаповецсем нимĕç врачĕпе Ширманпа пĕрле психиатрически больницăна пычĕç те: больница хупăнать, чирлисене тыла, Белоруссие турттарса каяççĕ, тесе пĕлтерчĕç. Ширман çапла каланине нимĕçсен гарнизонри врачĕ Эрлих çирĕплетсе пачĕ. Чирлисене пурне те нимĕçсем вăйпах автомашина çине лартрĕç, больницăри шурă кĕпе-йĕм таврашне, чашăк-тирĕксене, апат-çимĕçсене тиерĕç те Некрасово ялĕ патнелле кăларса ячĕç, унта вара чирлисене персе вĕлернĕ».

Нимĕçсен иприта хирĕç кĕрешмелли препарата тĕрĕслесе пăхмалла пулнă. Орелри алăстаçăсен мастерскойне шуç-тимĕртен яpaлaсем тунă çĕрте кĕкĕрт кислоти кирлĕ пулнине кура, нимĕçсен хуçалăх комендатурин начальникĕ Шмидт мастерской руководительне кĕкĕрт кислотине хуçалăх комендатурин складĕнчен илме сĕннĕ. Çав «кислотана» мастерскоя илсе пырсан рабочисем нумайĕшĕсем, уйрăмăн илсен, Ноздруновпа Черенков хăсма пуçланă. Сентябрĕн 9-мĕшĕнче ирхине мастерскойри рабочисем пурте нимĕн курмиех суккăр пулса ларнă, вĕсене вара хулари больницăна ăсатнă. Унта врачсем чирлĕ çынсем ипритпа йывăррăн сиенленнине палăртнă, анчах сывата тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнма пултарайман, мĕншĕн тесен ипритпа сиенленнĕ çынсене пурне те нимĕç влаçĕсем нимĕçсен лазаретне вырнаçтарма хушнă. Унта, лазаретра, нимĕçсем ипритпа сиенленнĕ çынсене лабораторире клиника тĕлĕшпе тĕплĕн тĕрĕслеме тытăннă, вĕсене темиçе хутчен фотоаппаратсемпе ӳкерсе илнĕ, вĕсене Киевран, Харьковран тата Одессăран килнĕ нимĕç врачĕсене кăтартнă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Н. Н. Бурденко, фронтри суд медицинин главнăй эксперчĕ медицина службин полковникĕ И. Ф. Огарков, Орел больницинчи врачсем В. И. Бикенев, В. Н. Преображенский, Н. А. Марченко, Н. Я. Сабуров, Б. Н. Гусев тата С. П. Протопопов юлташсенчен тăракан медицина эксперчĕн комиссийĕ, ипритран сиен курнă Ноздруновпа Хархардина тата Нестеров кăтартса панă тăрăх тата вĕсене тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, çакна палăртнă: нимĕç оккупанчĕсем мастерскойри рабочисене ипритпа ятарласах наркăмăшлантарнă пулнă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Н. Н. Бурденко, фронтри суд медицинин главнăй эксперчĕ медицина службин полковникĕ И. Ф. Огарков, фронтăн главнăй патологĕ профессор Д. Н. Выропаев, арми патологĕ доцент Н. В. Константинович, арми суд медицинин эксперчĕ капитан В. А. Дробышевский тата анатоми лабораторийĕн врачĕ-патологĕ старши лейтенант И. И. Дорохов юлташсенчен тăракан медицина эксперчĕн комиссийĕ хула тĕрми, кирпĕч завочĕ, Некрасово ялĕн варĕнчи, ачасен хули пулнă территори çинчи, Медведевски вăрманти тата Малая Гать ялĕ патĕнчи вăрманти масарсенчен кăларнă 932 çынăн виллисене касса тĕрĕслесе пăхнă.

Комисси çав вилесем пĕр çулталанăк е çулталăк çурă каярах персе пăрахнă совет граждăнĕсен виллисем пулнине палăртнă. Перессе çав çынсене пăшалпа питĕ çывăхран, ĕнсерен пенĕ. Сăмахран, Некрасово ялĕ патĕнче, вар тĕпĕнчи масарта, нимĕн йĕркисĕр выртакан 72 виллене тупнă. Çамрăк ачасемпе хĕрарăмсен виллисем çинче шурă пиртен тата кăвак пиртен çĕлетнĕ кĕпесем пулнă, кĕпесем çинче «Облаçри психиатрически больница» тесе лартнă клеймосем пулнă. Шăтăка чавса кăларнă çĕрте чĕнсе пынă çак çынсем: психиатрически больницăра главнăй врач пулнă Беляев, çав больницăн отделенийĕсенчен пĕрин заведующийĕ Рябцев тата старши медсестра Елисеева вилесем çинчи тумтирсене палласа илнĕ, вăл тумтирсем психиатрически больницăн пулнине çирĕплетсе панă. Тумтирсенченех вĕсем нумайĕшĕсен виллисене те палласа илнĕ.

мерĕнче, Орел администраци округĕн командующийĕ генерал-майор Гаманн алă пуснă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Унта Орел хулинче пурăнакан çынсен пурин те «ĕç биржине» çырăнма пымалла тесе пĕлтернĕ. Нимĕçсен фашистла пусмăрçисем совет граждăнĕсене ирĕксĕрлесе «ĕç обязательствисене» алă пустарнă.

Орел хулинче Сакко-Ванцетти урамĕнчи 48-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакан А. М. Сысоева гражданка çапла пĕлтернĕ: Германие «харпăрхăй ирĕкĕпе» каяссине çинчен «ĕç обязательствине» алă пусассинчен пăрăннăшăн нимĕç комендатури совет граждăнĕсене арестлесе 3—5-шар талăк хушши подвалра тытса усранă, çапла майпа «ĕç обязательствисене» ирĕксĕрлесе алă пустарасшăнччĕ.

Нимĕçсем Орел хулинче хуçаланнă тапхăрта хĕрсемпе хĕрарăмсене кăна 20.000 çынна ытла чуралăха хăваласа кайнă.

Германин тискер чуралăхĕнчен хăраса, совет çыннисем хăйсене хăйсем йывăррăн сиенленĕ. Нумай хĕрсемпе хĕрарăмсем, чура пулас мар тесе, фашистла каторгăна лекес мар тесе, хăйсене хăйсем сиенленĕ. Сăмахран, Александра Сысоевăпа Александра Ковалева гражданкăсем нимĕç чуралăхĕнчен хăтăлас тесе, хăйсен аллисене кĕкĕрт кислотипе çунтарнă та инвалидсем пулса юлнă. Кун пек ĕçсем сахал мар пулнă.

Çав тери йывăр асапсем тӳссе кăна совет çыннисем нимĕç чуралăхне е ирĕксĕр ĕçе хăваласа каяссинчен çăлăнса юлма пултарнă. Нимĕçсемшĕн ĕçлессинчен пăрăнакансене фашистла палачсем арестленĕ те концентрациллĕ лагерьсене ăсатнă, унта вара вĕсене пере-пере пăрахнă. Çапла, сăмахран, 1942 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче Первомайски урамра, 18—21 çулсенчи виçĕ çамрăк çынна, вĕсем ылханлă тăшманшăн ĕçлеме кăмăл туманнишĕн кăна, çакса вĕлернĕ.

1942 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче «Речь» хаçатра ку тĕлĕшпе çакăн пек çырса пĕлтернĕ:

«Вырăнти комендант кашни кун ĕçе тухма хушса панă приказа пурнăçа кĕртменшĕн, çапла вара саботаж тунăшăн, ĕççĕр çӳрекен Алексей Матвеева, Иван Кочергина тата Дмитрий Ключникова, саботажниксем вырăнне хурса, 1942 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче çакса вĕлернĕ.

Вырăнти комендант».

Нимĕçсен фашистла войскисем Орел хулинчен чакса тухас умĕн çар комендантĕ Гаманн палач пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă:

«Орел çапăçу пыракан зона пулса тăни çинчен пĕлтеретĕп. Гражданла халăхăн халех хуларан хĕвеланăç еннелле тухса каймалла. Хуларан урăх еннелле тухса каякансене хĕçпăшал вăйĕпе чарса лартатпăр.

15 çултан пуçласа 55 çула çитичченхи арçынсене, хĕçпăшал тытма пултараканскерсене, халичченхи пекех тытса чараççĕ. Вĕсем казарма урамĕнчи çар çыннисен лагерьне çийĕнчех пырсан кăна тытса хупассинчен хăтăлма пултараççĕ. Тĕттĕм пулнă хыççăн урамра тĕл пулакан кашни гражданла çынна персе пăрахаççĕ. Çар комендантĕ генерал-майор Гаманн».

Нимĕç захватчикĕсем Орел хулинчи арçынсене пурне те тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, вĕсене нимĕçсен тылне кайма хушнă. Анчах та совет патриочĕсем, фашистла каторгăна кайма кăмăл тумасăр, ăçта май килнĕ çавăнта пытана-пытана юлнă. Гитлеровецсем пытаннă çынсене çуртсем тăрăх шыраса çӳренĕ, хăйсен аллине лекекенсене пурне те конвойпа тыла ăсатнă. Фашистла нимĕç мерзавецĕсем совет çыннисене шыраса тискер кайăксем пек талкăшса çӳренĕ.

Орел хулинчи Пятницкая Слободара пурăнакансем Ока шывĕн сылтăм çыранĕ ишĕлсе аннипе пулнă шăтăксенче пытанса пурăннă.

Пятницкая Слобода районĕнче çавăн пек шăтăксем 4 пулнă. Вĕсен кашнин тăршшĕ 400—500 метр таран пулнă. Çав шăтăксен тĕпĕнче Пятницкая Слободари тата хулан ытти районĕсенчи арçынсемпе хĕрарăмсем пытанса юлнă.

Çав Слобода çыннисем В. А. Навозин, М. А. Логвинов, М. А. Чепелевич, М. А. Кудрина, Е. А. Поспешинская, В. А. Перелыгина, Г. Н. Боев, Е. А. Клочкова, А. А. Кожин, И. Гаврилов, А. Н. Казначаева тата Н. Семенов çапла каласа панă: «Халăх ăçта пытанса пурăннине пĕлсе, фашистсен жандармĕсем 1943 çулхи августăн 2-мĕшĕнче шăтăксем патне пычĕç. Вĕсем унта пытанса пурăнакан çынсене тухма хушрĕç. Тухмасан шăтăксене сирпĕнтерсе ярассипе хăратрĕç. Хĕрарăмсемпе арçынсем нимĕçсем хушнине итлерĕç, арçынсем хушнине пăхăнмарĕç. Вара фашистсем кашни шăтăка взрыв тăвакан япаласем хучĕç те тухса кĕмелли шăтăксене питĕрсе лартма шутларĕç. Совет патриочĕсем взрыв хыççăн тухса тулнă газсемпе пăчăхма пуçланă, анчах çапах та тулалла тухман. Вĕсем гитлерла палачсен аллине парăниччен вилни ырăрах тесе шутланă. Фашистсем ăнăçу тăваймасăр пăрахса кайнă, тепĕр кунне, 1943 çулхи августăн 3-мĕшĕнче, взрыв тумалли япаласем тиенĕ автомашинăсемпе татах çав шăтăксем патне пынă. Хăйсемпе пĕрле вĕсем советăн тыткăна лекнĕ темиçе çар çыннине илсе пынă та, вĕсене персе пăрахассипе хăратса, кашни шăтăк ăни патне авиабомбăсемпе аммонал ещĕкĕсем хурса тухма хушнă. Ачасен куççулĕ те, хĕрарăмсем йăлăнса ыйтни те, нимĕн те чарма пултарайман гитлеровецсене. Вĕсем шăтăк анисене взрыв туса питĕрсе лартрĕç, анчах совет çыннисене вĕлерме пултараймарĕç. Хĕрарăмсемпе ачасем, ишĕлсе аннă çĕре чавса уçса, асапланса пĕтнĕ совет çыннисене ирĕке кăларчĕç».

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси Орел хулинче тата Орел облаçĕнче тунă тискер ĕçсемшĕн; нимĕн айăпсăр мирлĕ çынсене массăллăн вĕлерсе пĕтернĕшĕн; тыткăна лекнĕ аманнă тата чирлĕ çар çыннисене асаплантарса вĕлернĕшĕн; совет граждăнĕсене çаратса пĕтернĕшĕн тата нимĕç чуралăхне хăваласа кайнăшăн; колхозсене, ялсемпе саласене, хуласене ишĕлтерсе пĕтернĕшĕн; государство, коопераци тата общество учрежденийĕсен пурлăхĕсене çаратса пĕтернĕшĕн çаксем ответлă пулса тăраççĕ тесе шутлать: нимĕçсен 2-мĕш танковăй армин командующийĕ Шмидт генерал, Орел администраци округĕн командующийĕ, хулан çар комендантĕ Гаманн генерал-майор, çавăн пекех тата çав тери тискер ĕçсене тӳрремĕнех хăйсем туса пынă çак çынсем: Орелри тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕн начальникĕ Гофман майор, Орелри тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерь начальникĕн помощникĕ Матерн капитан, гарнизонри врач Эрлих, нимĕç врачĕ Ширман, тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕнчи нимĕç врачĕ Купер, ĕç биржин начальникĕ Леве, ĕç биржи начальникĕн заместителĕ Фохт, хуçалăх комендатурин начальникĕ Шмидт, Мутце тата Плац ассистентсем, ĕç биржи лагерĕн заведующийĕ Лох, Винклер, Штрикке, Шольц фельдфебельсем, обер-ефрейтор Диль ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем нимĕçсен фашистла войскисем вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта Орел хулипе Орел облаçĕнче, халĕ Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнăскерсенче, тунă çав тери тискер ĕçсемшĕн пурте хаяр ответ тытма тивĕçлĕ.

Крепосла йĕрке туса хуни тата совет граждăнĕсене нимĕç чуралăхне илсе кайни

Орел хулине йышăнса илсен, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем çийĕнчех совет çыннисене ирĕксĕрлесе Германие чуралăха хăваласа кайма тытăннă. Чуралăха хăваласа каяссине Леве пуç пулса тăракан ятарласа тунă «ĕç биржи» урлă туса пынă. Леве заместителĕ Фохт, унăн ассистенчĕсем Мутце тата Плац пулнă. «Ĕç биржи» çумĕнче лагерь организациленĕ пулнă. Унта Лох пуç пулса тăнă.

1941 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче, «Речь» ятлă хаçатăн пĕрремĕш но-

Ют çĕршывсенче

АКĂЛЧАНСЕМПЕ КАНАДЕЦСЕН ÇАРĔСЕН КĂНТĂР ИТАЛИРИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер акăлчансен 8-мĕш армийĕ Кăнтăр Италире тата 12 хулапа яла йышăнса илнĕ. Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем 9 миля малалла кусна.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Неаполь районĕнчи аэродромĕпе çулйĕрĕсене атакăланă. Авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Кăнтăр Италири çар объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Пĕлтерӳ

Паян, сентябрĕн 9-мĕшĕнче, касхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе лекци пулать. Лекци теми çакăн пек: **«Совет халăхĕн фашистла Германие хирĕç пыракан Отечественнăй аслă вăрçи—тĕрĕслĕхшĕн пыракан, ирĕке кăларакан, пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăрать».**

Лекцие лектор **Мошнин** юлташ вулать.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—28, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1114 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.